25-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
11
КĚÇНЕРНИКУН
33(6270) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирěн войскăсем ВОЛЧАНСК тата ЧУГУЕВ хулисене тытса илнě

Февралěн 10-мěшěнче Украинăра пирěн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн ВОЛЧАНСК хулипе чугунç ул станцине, ЧУГУЕВ хулипе чугунçул станцине тытса илнě.

СОВИНФОРМБЮРО.

Лашасене акана хатěрлемелле

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерес ěçре туртăм вăйě мирлě вăхăтра та пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халě лаша вăйě ялхуçалăх ěçěсенче татах та пысăкрах вырăн йышăнать. Хаяр вăрçă обстановкине пăхмасăрах, партипе правительство колхозсене вăйлăн пулăшаççě. Пирěн республикăри колхозсенче кăçал та вяçě çěр ытла трактор тата комбайнсем нумай ěçлемелле. Вěсем, паллах, ялхуçалăхěнчи ěçěн пěр пайне туса пынипе колхозсене пысăк пулăшу парěç. Анчах çакă вăл колхозсем пěтěм лашасен вăйне ěçе мобилизацилесси çине çиелтен пăхмаллине пачах та пěлтермест. Йăлтах урăхла, лашасене кăçал нумай ěç тивет. Çуракине, тěпрен илсен, лашасемпе туса ирттермелле пулать.

Çавăнпа та лашасене акана кăларма тěплěн хатěрленес пулать. Лашасене пăхас, вěсемпе ěçлес тěлěшри обезличкăна халех пěтермелле. Ку тěлěшпе Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě йышăннă постановление республикăри пур колхозсен те тěплěн пурнăçа кěртмелле.

Кашни ěç лашине çуракине мăнтăр кăларасси—колхоз конюхěсен чыслă ěçě, çакăншăн конюхсен социализмлă ăмăртăва хутшăнса кěрешмелле. Колхоз председателěсем, бригадирсем кашни лашашăн ответлă пулса тăраççě.

Сěнтěр районěнчи „Хлебороб" колхозăн конюхě Васильев юлташ лашасене мăнтăр та сывă пăхса усрассишěн тăрăшса ěçлет. Вăл пěлет: акана тухас умěн колхозниксем конюхран ěçе юрăхсăр ырхан лаша мар, мăнтăр, вăйлă лаша ыйтаççě.

Çавăнпа та хăйсен ěçне юратса туса пыракан конюхсем, колхозра ěç нумай пулсан та, лашасен ěçлес пултарулăхне ÿстерсе пыма тăрăшаççě: вăхăтра шăвараççě, апат параççě, тасатсах тăраççě. Лашасене вěсем мěнле ěçре пулнине шута илсе тăрантараççě. Лаша инçе çултан таврăнать-и е хуçалăхри ěçрен таврăнать, отличник-конюх ăна яланах колхозникрен тěрěслесе йышăнать, уяса шăварать, апат парать.

Колхозсем çавăн пек ěçленě çěрте лашасене ěçе кÿлесси те йěркеллěн пулса пырать. Конюхсем лашасене юратса пăхни, упрани колхозниксем çине те куçать, колхоз лашине упраса тыткалама вěрентет. „Хлебороб" колхозăн лашисем халě, куллен ěçре çÿреççě пулсан та, мăнтăр, вăйлă. Конюх-отличник Васильев юлташ вěсене лайăх пăхать, кÿлмелли таврашсем те кунта кашни лаша валли хăйне уйрăм пур тата вěсем виçеллě, вырăнлă, çирěп. Васильев юлташ иртнě çул вунă кěсререн вунă тиха илсе пурне те тěрěс-тěкěл пăхса çитěнтернě.

Лашасен ěçри вăйěпе пултарулăхне нумай çěрте халь питех те япăх упраççě. Конюхсен ěçри ответлăхне пур çěрте те мар кирлě вырăна лартнă. Нумай колхозсенче конюхсем лашасене хуçасăрла пăхаççě. Сěнтěр районěнчех çавăн пек конюхсем сахал мар. Горький ячěпе тăракан колхоза коммунистка Веселова юлташ ертсе пырать. Калас пулать, Веселова юлташ „Лашасене пăхас тата вěсемпе усă курас ěçри обезличкăна пěтермелли мерăсем çинчен" йышăннă постановление конюхсем патне çитермен, лашасене пăхас ěçе лайăхлатас тěлěшпе нимěн те туман.

Лашасем çине çавăн пек чунсăрран пăхнине Сěнтěр районěнчи колхозсенче çеç мар курма пулать. Комсомольски районра Янкассинчи Буденный ячěпе тăракан колхозра лашасене пачах пăхмаççě тесен те вырăнлă. Кунти конюхсем каç пулас умěн лашасене пурне те пěр пек апат пăрахса параççě те витене ирччен тухса та пăхмаççě. Конюхсен япăх ěçне пула кунта пěр лашана витерех лашасем тапса вěлернě, тепěр лашана йывăр амантнă. Çěнě çула кěнěренпе ěнтě Буденный ячěпе тăракан колхозра 5 кěсре хăм пăрахнă. Лашасене кирлě-кирлě мар ěçе кÿлсе, тăрлавсăр хытă çÿреççě, ватса суранлаççě. Çавăн пек киревсěр фактсем ку колхозра лашасене пăхас ěçе пачах та хакламанни çинчен калаççě. Лашасемшěн кунта ответ тытаканни çук.

Лашасене пăхас тата вěсемпе усă курас ěçри обезличкăна пěтермелли мерăсем çинчен Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюрăвě çирěппěн кăтартса пачěç. Çав постановлени пур колхозсенче те лашасене пăхас ěçре халех çирěп йěрке тума хушать. Колхоз правленийěсен лашасем çине чунсăрран пăхакан çынсене çийěнчех ответ тыттармалла. Колхоз конюхěсен ěçěнче дисциплинăпа йěркелěх тумалла.

Çураки çитесси инçе юлмарě. Ăна отлично туса ирттерме çирěп лашасем кирлě. Кашни лашана халь ěç ик-виçě хут нумайрах тивет. Кăçал çуракине тухас умěн те, мирлě вăхăтри пек мар, лашасен кану вăхăчě кěскерех пулать. Çакна колхозниксен шута илмелле. Лашасене ěçре уйрăмах тимлěн тыткаламалла, вěсен ěçлес пултарулăхне сыхламалла. Хамăрăн интерессемшěн кирлě-кирлě мар ěçе лашасене кÿлсе турткалассине пăрахмалла.

Лаша апатне урăх çěре салатни пачах ан пултăр. Лашана кирлě кашни килограмм сěлě, утă лаша умěнче пулмалла. Çакăнпа пěрлех конюхсем лашасене апата лайăхрах майсемпе çитерессишěн куллен тăрăшса ěçлени кирлě. Апата тураса сěлěпе хутăштарса е пăтратса çитерни темиçе хут усăллăрах. Лашасен апатне хуçаллăн тыткалани, кашни лашана уйрăмăн илсе, утă апатлани конюхăн ěçěнче куллен курăнса тăтăр.

Иртнě çулхи çуракинче республикăри хăшпěр колхозсем майракаллă шултăра выльăхсемпе те усă курчěç. Майракаллă шултăра выльăхсем: вăкăрсем, хěсěр е сěт сахал паракан ěнесем хуçалăхри вак ěçсене ăнăçлăнах туса пыма пултараççě. Кăçал вěсен вăйěпе ěçре татах та анлăрах усă курас пулать. Вăкăрсемпе ěнесене кÿлмелли хатěрсем тумалла, вěсене кÿлěнсе çÿреме халех вěрентес пулать. Çакна туни лашасене хуçалăхри вак ěçсенчен хăтарать. Уя вăрлăх турттарма, трактористсем ěçленě çěр горючи, шыв леçсе пама, сухаçăсем патне апат илсе тухма вăкăрсемпе те пулать. Выльăх-чěрлěх фермисенче халь кулленех икшер-виçшер лаша ěçлет. Конюхсем вěсемпе фураж илсе килеççě, тислěк кăлараççě, нумай чухне тата кирлě-кирлě мар çěре кÿлсе чуптарса çÿреççě. Çав лашасен вырăнěнче малалла вăкăрсене ěçлеттермелле тăвас пулать. Çавăн пекех тихасене те çăмăл ěçе кÿлме хăнăхтарса пымалла.

Колхоз лашисене чăн-чăн хуçасем пек пăхса çуракине лайăх кăларар.

Укерчěк çинче: Танковăй войскăсен генерал-лейтенанчě В. М. Баданов (сулахайри) тата танковăй войскăсен генерал-лейтенанчě К. А. Ратмистров. ССР Союзěн Верховнăй Совет Президиумě вěсене иккěшне те 2-мěш степеньлě Суворов орденěпе наградăланă.

Совет Информаци Бюровěнчен

Февралěн 9-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Февралěн 9-мěшěнче пирěн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн **Белгород** хулипе пысăк чугунçул узелне, çавăн пекех тата **Шебекино** хулине тытса илнě.

Курскран çурçěртерехре пирěн войскăсем **Поныри** ятлă район центрěпе пысăк чугунçул станцине тытса илнě.

Курскран кăнтăртарахра пирěн войскăсем **Солнцево** ятлă район центрěпе чугунçул станцине, **Медвенское** ятлă район центрне тата халăх пурăнакан темисе пысăк пункта тытса илнě.

Фронтăн ытти участокěсенче пирěн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростов районěнче пирěн войскăсем тăшманăн вăйлăн хирěç тăракан чаçěсемпе хаяррăн çапăçнă. Нимěçсен танкěсемпе пехоти темиçе хут та контратака тунă, хăйсен çухатнă позицийěсене каялла тытса илме тăрăшнă. Пирěн чаçсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă кăна мар, вěсем тата тăшман оборонине çěнтерсе малалла та кайнă. Батайск районěнче Н-ски соединенин чаçěсем 40 танк, автомашинăсем тата хăй тěллěн çÿрекен тупăсем тиенě 2 эшелона, продовольствин тата тěрлě çар пурлăхěсен пысăк склачěсене тытса илнě.

* * *

Кăнтăр-Хěвеланăç фрончěн пěр участокěнче Н-ски чаçăн боецěсем тăшманăн аэродромне йышăннă та нимěçсен унта тăнă 30 бомбардировщикне тытса илнě. Çав аэродромшăн пынă çапăçусенче 400 гитлеровеца çити вěлернě, 15 танк тата 8 оруди пěтерсе тăкнă. Пирěн тепěр чаçăн подразделенийěсем малалла кайса 3 оруди, 11 автомашина тата çар пурлăхěпе боеприпассен складне тытса илнě.

* * *

Краматорская районěнче пирěн войскăсем тăшманăн хаяр контратакисене сире-сире ярса малалла кайнă. Нимěçсем совет чаçěсен наступленине чарма хăтланаççě, çапăçăва танксен йышлă вăйěсене кěртсе яраççě. Пирěн чаçсем хирěç вăйлăн пырса çапса гитлеровецсене каялла сирсе яраççě, тăшманăн чěрě вăйне тата унăн техникине пěтерсе пыраççě. Пěр участокра нимěçсен моторизованнăй пехоти вуншар танк пулăшса пынипе контратака тунă. Пирěн боецсем çав контратакăна сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем тÿстерсе каялла хăваласа янă. Тепěр участокра Н-ски чаçăн подразделенийěсем 3 танк пěтерсе тăкнă тата нимěçсен 300 салтакěпе офицерне çити вěлернě.

* * *

Балаклея районěнче Н-ски соединенин чаçěсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Балаклея хулинче пирěн боецсем продовольствин 5 складне, хěçпăшалсен складне, тумтирсен складне, 70 автомашина тата ытти тěрлě çар пурлăхěсем нумай тытса илнě.

* * *

Курск районěнче пирěн войскăсем ăнăçлăн наступленилле операцисем туса пынă. Н-ски соединенин чаçěсем халăх пурăнакан нумай пысăк пунктсене тытса илнě. Н-ски стрелковăй чаçăн боецěсем тăшманпа çапăçса 4 танк, 13 оруди, 500 винтовка, 12.000 снаряд, 35 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнě. Нимěçсен 200 салтакěпе офицерне тыткăна илнě.

* * *

Краснодар крайěнче кěрешекен партизансен отрячě юлашки кунсенче тăшманпа çапăçса нимěçсен 110 салтакěпе офицерне вěлернě тата боеприпассен складне сирпěнтерсе янă. Совет патриочěсем 4 оруди, 30 автомашина, 6 мотоцикл тата 3 станковăй пулемет тытса илнě. Крымри партизансен отрячě, январь уйăхěн вěçěнче нимěçсен икě çар эшелонне ÿпěнтерсе янă. Крушение пула 2 паровоз тата чěрě вăйпа грузсем турттарса пыракан 30 вагон çěмěрěлнě. Партизансен пěр ушкăнě январěн 30-мěшěнче шоссе çулě çинче нимěç связисчěсем ларса пыракан 2 мотоцикла пěтерсе тăкнă.

* * *

Итальянецсен «Равенна» ятлă дивизийěнчи 38-мěш пехотнăй полкăн тыткăна лекнě командирě полковник Марио Бианки çапла каласа панă: «Вырăссем наступлени тума пуçласан эпě çакăн пек приказ илтěм: кирек мěн пулсан та хамăрăн позицисене тытса тăмалла, пěр утăм та каялла чакмалла мар. Вырăссен артиллерийěпе миномечěсем пире пысăк çухатусем тÿстерчěç. Пирěн полкра 3.000 çынна яханччě, икě кун çапăçнă хыççăн 300 çын çеç тăрса юлчě. Ыттисене вěлернě е амантнă, е вěсем тыткăна паранннă. Чаçсем хушшинчи çыхăну пăсăлчě. Эпě каялла чакма шут тытрăм. Çул çинче пěр йěрке те пулмарě. Чаçсем пěр-пěринпе хутшăнса кайрěç, штабсем тата салтаксем хăраса ÿксе пěр чарăнмасăр чупрěç. Çапса аркатнă чаçсенче йěрке кÿме май пулмарě. Салтаксем тарма çăмăлтарах пултăр тесе хăйсен хěçпăшалěсене çул çинех пăрахса хăварнă. Малалла хирěç тăма май пулмарě те эпир вара—офицерсемпе салтаксем — вырăссене тыткăна парăнтăмăр».

Чăваш АССР Совнаркомěнче

Вырăнти топливăна хатěрлесе турттарас тěлěшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогěсем

Вырăнти топливăна хатěрлесе турттарас тěлěшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулти январь уйăхěнчи итогěсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомě çапла йышăннă:

Чăваш АССР Совнаркомěн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне Сěнтěрвăрри Леспромхозěнчен илсе Кÿкеçри райлесзага (директорě Федоров, Шупашкар райсовет исполкомěн председателě Миронов) парас тата ěçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме райлесзага 15.000 тенкě укçа парас; январь уйăхěнчи вутă хатěрлемелли плана ирттерсе тултарнăшăн, çавăн пекех тата вырăнти учрежденисем валли вутă хатěрлес тěлěшпе пěтěм район 1943 çулти пěрремěш квартал планне 40,6 процент, турттарса тухас тěлěшпе 52,3 процент тултарнăшăн Мироновпа Федоров юлташсене райлесзага панă укçаран пěр уйăхри ěçукçи чухлě премиии парас;

Тăвай леспромхозне (директорě Кириллов, райсовет исполкомěн председателě Федоров) ěçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкě премии парас.

Çакăнпа пěрлех Совнарком Вырăнти топливо промышленность Управленийěн Шупашкар, Улатăр, Çěмěрле тата Вăрмар леспромхозěсем, Элěк, Йěпреç, Куславкка, Хěрлě Чутай, Кувакино, Октябрьски тата Пăрачкав райлесзагěсем пачах çителěксěр ěçленине палăртнă.

Совнарком çакна паллă тунă: Вăрмар райсовет исполкомěн председателě Биктимиров, Куславкка райсовет исполкомěн председателě Прытченков, Кувакино райсовет исполкомěн председателě Кругликов тата Çěмěрле райсовет исполкомěн председателě Носков юлташсем, 1942 çулти декабрěнче вутă хатěрлес тěлěшпе вěсем çителěксěр ěçленине Совнарком кăтартса панă пулин те, вутă хатěрлес ěçе вăйлатас тěлěшпе мерăсем йышăнман. Совнарком çÿлте асăннă райисполкомсен председателěсене вěсем январь уйăхěнче плана мěншěн тултарманни çинчен ăнлантарса пама хушнă тата райсоветсемпе горсоветсен исполкомěсен председателěсене пурне те вутă хатěрлес ěç мěнле пыни çинчен сÿтсе явса, палăртнă плансене пурнăçа кěртме васкавлăн практикăллă мерăсем йышăнма хушнă. Совнарком Вырăнти топливо промышленность Управленин начальникне Стуриков юлташа плана пурнăçа кěртес ěçре тата повинность йěркипе явăçтарнă ěç вăйě ěçе тухассине организацилес тěлěшре вырăнти учрежденисене практикăллă пулăшу пама хушнă.

Февралěн 14-мěшěнче йěлтěрлě кросс пуçланать

Çěмěрлере кроса начар хатěрленеççě

ÇĚМĚРЛЕ, февралěн 9-мěшě. („Чăваш Коммуни" корр., телефонпа). ВЛКСМ райкомěн секретарě Кощеева юлташ пěлтернě тăрăх, комсомолăн районри пуçламěш организацийěсем Хěрлě Çар XXV çул тултарнă ятпа иртекен йěлтěрлě кроса „вăтам" хатěрленеççě. Çěршер çамрăк тăтăшах йěлтěрлě тренировкăсене хутшăнать, темиçе çěр çамрăк йěлтěрçě-боецсем хатěрлемелли 20 сехетлě программăна вěренсе тухнă... Анчах—фактсем пачах урăххине кăтартса параççě.

Йěлтěрлě кроса хатěрленес тěлěшпе комбинатри, 3-мěш номерлě шкулти çамрăксем çеç хăшпěр ěçсене тунă-ха. ВЛКСМ Центральный Комитечěн комсоргě Анисимов юлташ тăрăшнипе, комбинатра йěлтěр базисем организациленě, çамрăксем кулленех йěлтěрпе ярăнма хăнăхаççě. Комбинатри çамрăксем хушшинче 200 йěлтěрçě-боец хатěрленě. Иртнě вырсарникун хěрачасен йěлтěрлě ăмăртăвне ирттернě. Ăмăртура 3 километрлă дистанцие Медведева юлташ 17 минутăра чупса тухнă. Малтан шутласа палăртнă тăрăх, комбинатра кроса çěршер çамрăк хутшăнать.

Комсомолăн колхозсенчи пуçламěш организацийěсенче вара тренировкăсем ирттерме мар, йěлтěрлě кросс хăçан пуласси çинчен те пěлмеççě. ВЛКСМ райкомěнче ěçлекенсем, райкомол секретарě Кощеева юлташ хăй те, йěлтěрлě кроса хатěрленес ыйтупа сахал интересленеççě. Вěсем вырăнсене тухса курмаççě. Кросс пуçланиччен юлнă хакла вăхăта кабинетра ларса ирттереççě. Кощеева юлташ Паланри, Мыслецри заводсенче пачах пулман, профсоюзсемпе комсомолецсен йěлтěрлě кросне ирттерес тěлěшпе нимěнле кăтартусем те паман.

— Пирěн шутпа унта çамрăксем çук,—тет Кащеева юлташ.

„Сирěн шутпа çук пулě" те, Кощеева юлташ, чăннипе илсен, вăл заводсенче çамрăксем сахал мар ěçлеççě.

Вăхăт кěтмест. Стартчен 4 кун çеç юлчě.

Кросчен юлнă вăхăтăн кашни сехечěпе усă курмалла.

Х. Лисин.

Эпир старта тухма хатěр

ИШЛЕЙ. Тепěр тăватă кунран комсомолецсемпе профсоюзсен йěлтěрлě кросě пуçланать. Комсомолпа профсоюз организацийěсем кроса тимлěн хатěрленеççě.

Кроса ирттерме районă 13 пая уйăрнă, 1.058 мăшăр йěлтěр хатěрленě. Вăл шутран 65 мăшăрне килте тунă.

Комсомолăн районри чылай пуçламěш организацийěсенче йěлтěрçě-боецсем хатěрлемелли 20 сехетлě программăна вěренсе пěтернě. Тăрăнри туллимар вăтам шкулта, сăмахран, 40 йěлтěрçě хатěрленě. Йěлтěрçě-боецсем хатěрленипе пěр вăхăтрах 26 çамрăка йěлтěр спорчěн обществăллă инструкторěсем пулма вěрентрěмěр.

Хăймалакасси ялсоветěнчи Жданов ячěпе тăракан колхозри çамрăксем пирвайхи юр хыççăнах кроса хатěрленме тытăннă. Унти çамрăксем кулленех йěлтěрлě тренировкăсенче пулаççě. Кроса хутшăнакансен сывлăхне медицина комиссийě витěр тěрěсленě.

Йěлтěрлě кроса ирттерме районра пěтěмпе 165 команда организациленě. Вěсенче 3.000 çынна яхăн пěрлешсе тăрать. Виçě çěрте куçса çÿрекен йěлтěр базине организациленě. Вěсенче 100 йěлтěр ытла. Куçса çÿрекен йěлтěр базисен руководителěсене ВЛКСМ райкомě çирěплетнě.

Профсоюзсемпе комсомолецсен йěлтěрлě кросне районри мěнпур колхозсенчи тата учрежденисемпе предприятисенчи çамрăксем хутшăнаççě. **И. ГРИГОРЬЕВ,**
ВЛКСМ райкомěн секретарě.

Республикăри партипе совет тата колхоз активěн канашлăвě умěн

Элěк районěн делегачěсем

Элěк машинно-тракторнăй станцин коллективě ялхуçалăхěнче малта пыракансен республикăри канашлăвне кăçал хăйěн чи лайăх стахановецěсене ярать. Канашлăва хатěрленсе трактористсемпе трактористкăсем тракторсене юсас ěçе пысăк хăвăртлăхпа туса пычěç. Паянхи куна МТС-ăн 9 бригади тракторсене юсас ěçе вěçлерě. Ремонтра халь юлашки 4 трактор тăраççě. Вěсене те февралěн 10-мěшě тěлне юсаса пěтермеллеччě пирěн, анчах радиаторсем тума бабит çитменни ěсе пěр вăхăт чарса тăчě.

Кăçал пирěн трактористсем çěнěрен 17 радиатор турěç. Чернов, Федотов, Семенов трактористсем радиаторсем тăвас ěçре пысăк мастерлăх кăтартса ěçлеççě.

Ялхуçалăхěнче малта пыракансен республикăри канашлăвне кайма Р. Павлов, Н. Лаврентьева, Е. Николаев трактористсем тивěç илчěç. Наталия Лаврентьева 1942-мěш ялхуçалăх çулěнче хăйěн çулталăкри ěç планне 240 процент тултарнă, 1000 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Вăл хăйěн «СХТЗ» маркăллă тракторне юсанă, çуракине тухма тěплěн хатěрлесе çитернě. Егор Николаев—трактор бригадин бригадирě. Унăн бригади 1942 çулта тракторпа тумалли ěç планне 138 процент тултарнă, 800 килограмм горючи перекетленě. Бригада хăйěн тракторěсене тата вěсенчен кăкарса ěçлемелли машинăсене пěтěмěшпех юсаса ěçе тухма хатěрлесе лартнă.

Г. ЯХВАРОВ,
МТС директорě.

Промысла артелěсен ěçне вăйлатмалла

ШАХАСАН. (**Хамăр корр.**). Иртнě çулта районри промышленноçпа промысла кооперацийě çулталăк планне 63 процент, вăл шутран ěçсыннисем валли куллен кирлě таварсем туса кăларассине 56 процент тултарнă. Райпромкомбинат хăйěн çулталăкри планне 105 процент, «Сталь» промартелě — 110.8 процент пурнăçланă.

Анчах та хăшпěр артельсем иртнě çулта япăх ěçленě. Шуркассинчи Советсен IX-мěш съезчě ячěпе тăракан промартель çулталăк планне 44 процент, Ямашри «Стахановец» промартель — 50 процент çеç тултарнă. Матьшÿри «Патрон» артель çулталăк планне пурě те 11,2 процент çеç пурнăçланă. Çак артельсенче массăллă ăнлантару ěçне кирлě пек туса пыман, çулталăк хушшинче стена хаçачěсем пěр номер те кăларман. Ку артельсенче халě те кирлě улшăну туман-ха. Ямашри «Стахановец» артельре çăпата тăвакансем А. Ивановпа Н. Иванов кулленхи нормăна 20—30 процент çеç тултараççě. Чăпта çапакансем А. Орлов, А. Сидорова, М. Артемьева январь уйăхěнче плана 40—50-шар процент çеç пурнăçланă. «Патрон» артельре иртнě çул тăмран чашăк-чÿлмексем тунă пулсан, кăçал çак ěç чарăнса ларнă.

В. Веселов.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Эсир пирěн Тăван çěршывăн патриочěсене, танксемпе самолетсем тума хăйсен перекетленě укçи-тенкисене хывнăскерсене, саламланипе хавхаланса, эпě, Чăваш республикинчи Пăрачкав районěнчи Максим Горький ячěпе тăракан колхозăн членě, Мария Филипповна Ширманова, хамăн перекетленě укçапа танк туянма шутларăм, çавăн валли Госбанка 50.000 тенкě укçа хыврăм. Мана Хěрлě Çар 25 çул тултарнă ятпа çав танка хамăн ывăлăма—Андрей Ильич Ширманов танкиста парнелеме ирěк пама ыйтатăп.

Мария Филипповна ШИРМАНОВА.

Чăваш АСС Республикинчи Пăрачкав районěнчи Максим Горький ячěпе тăракан колхоз

Мария Филипповна ШИРМАНОВА юлташа

Спасибо Сире, Мария Филипповна, эсир Хěрлě Çарăн бронетанковăй вăйěсемшěн тăрăшнăшăн. Эсир ыйтнине пурнăçа кěрě.

Манăн салама йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Вăрман хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри хăшпĕр колхозсем 4-мĕш кварталта вутă хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Досаево ялсоветĕнчи «Ильич» колхоз (председателĕ Кузнецов) 180 кубометр вырăнне 186 кубометр хатĕрленĕ, 80 кубометр вырăнне 102 кубометр турттарнă. Çавăн пекех «Четай» колхоз колхозникĕсем 130 кубометр хатĕрлес вырăнне 148 кубометр хатĕрлерĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче «Свобода» колхоз членĕ И. Трофимов юлташ лайăх ĕçленине палăртмалла. Вăл вăрманта пĕр татăлмасăр ĕçлесе, план тăрăх 100 кубометр вутă касас вырăнне 112 кубометр каснă, «Шимар» колхоз членĕ Петр Ефремов юлташ 120 кубометр каснă, Валентина Харитонова юлташ нормăна 130 процент, Димитров ячĕпе тăракан колхозри колхозница Наталия Спиридонова нормăна 125 процент тултарнă. Вĕсене леспромхоз тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарас майпа кашнинех 5-шер кубометр вутă парса премилерĕ. Преми илнĕ хыççăн стахановецсем тата та лайăхрах ĕçлеме сăмах парĕç. «Шимар» колхоз членĕ Валентина Харитонова юлташ çапла каларĕ:

— Çĕршыв лайăх ĕçлеме, çине тăрса ĕçлеме хушать. Çĕршыва халь вутă нумай кирлĕ. Эпир тылра ырми-канми ĕçлени сая каймасть. Эпир хамăр ĕçе мĕн тери лайăхрах, юрататарах туса пыратпăр, [illegible] Эпĕ вăрман ĕçлеме кайиччен уйхир ĕçлерĕм. Пĕтĕмпе 300 ĕçкунĕ ытларах турăм. Халĕ эпĕ пĕрремĕш кварталта та малтанхи пекех стахановла ĕçлеме сăмах паратăп.

Анчах та вутă хатĕрлессипе турттарас ĕçе Байсубино ялсоветĕнчи «Клейка», «Красноармеец» колхозсем начар ĕçлеççĕ. [illegible] колхозсем 4-мĕш кварталта пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен. Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ильин юлташ ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче вăрмана пĕр çын та яман. «Красноармеец» колхозран вăрман хатĕрлеме кайнă А. Яковлевăпа М. Никифорова 12 кун хушшинче мĕн пурĕ те 6 кубометр çеç вутă хатĕрленĕ. Юлашки вăхăтра ĕçрен пăрахса киле таварăннă.

Çакиашкалах Янчелла ялсоветĕнчи колхозсем те (4 колхоз) пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен. Албахтино ялсоветĕнчи «Партизан» колхозăн (председателĕ А. Петров) 120 кубометр вутă турттармалла пулнă пулсан, пĕр кубометр та турттарман. Çакăн пиркиех ĕнтĕ леспромхоз вутă хатĕрлемелли плана тултарнă пулин те, вутă турттармалли плана вăл 60 процент ытларах çеç тултарнă.

Халĕ пĕрремĕш кварталăн малтанхи пĕр уйăхĕ иртрĕ ĕнтĕ. Ку кварталта «Буксир», «Пахарь», «Шимар», «Ильич», Димитров ячĕпе тăракан колхозсем т. ыт. те аван ĕçлеççĕ. Çак асăннă колхозсем вунăкунлăх графикне пур те 90—100 процент тултарса пыраççĕ.

Анчах та Албахтино, Янчелла, Байсубино ялсовечĕсем пĕрремĕш кварталта та вутă хатĕрлеме вăрмана ĕç вăйĕ яман. Пĕрремĕш кварталта Албахтино ялсоветĕнчи «Партизан», «Сила» колхозсен 750 кубометр вутă хатĕрлемелле пулнă. Анчах та вĕсем январĕн 29-мĕшне çитсе те пĕр кубометр та хатĕрлемен. Пĕтĕм районĕпе илсен вара ĕç пачах çителĕксĕр. Район малтанхи [illegible] 92 процент, турттарас тĕлĕшпе 57 процент кăна тултарнă.

Вутă хатĕрлес ĕçе япăх пурнăçласа пыни — вăрманта ĕçе тĕрĕс организацилеменнинчен килет. [illegible] Ку çеç те мар, тепĕр чухне тата турттарса пынă вутта [illegible] Çак çитменлĕхсем ĕçре пысăк чăрмав кÿреççĕ. Красноармейски леспромхоз директорĕ Вишнев юлташ çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

С. Шадин.

Малта пыракан коллектив

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çар куллен туса пыракан çĕнтерÿсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсене фронта пулăшассине вăйлатма чĕнеççĕ. Ана вăрман касакансемпе турттаракансем лайăх пĕлеççĕ. Вĕсен çĕршыва вăрман материалĕсем парса тăмалла.

Январь уйăхĕнче пулса иртнĕ канашлусенче участоксемпе вăрман пункчĕсен коллективĕсем 1-мĕш квартал планне срокчен 15 кун малтан тултарма пулнăччĕ. Çакăн хыççăн коллективсенче социализмлă ăмăрту сарăлса кайрĕ.

Хальхи вăхăтра ăмăртура Çĕмĕрле вăрман пункчĕн коллективĕ малта пырать. Коллектив январь уйăхĕнчи плана срокчен тултарчĕ. Уйрăмах вăл турттарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕ. Январь уйăхĕнче унăн 4.147 кубометр вутă турттармалла пулнă. 25 кун хушшинче вăл 5.350 кубометр турттарса плана 129 процент тултарчĕ.

Вăрман пунктĕнчи кашни рабочи хăйĕн ĕç нормине ирттерсе тултарма пулнă. Вăрман касакансем, акă, куллен 3-шер кубометр вутă касса хатĕрлеме пулнă.

Илнĕ обязательствăна чылайĕшĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Стахановец Василий Михайлов январь уйăхĕнче кашни кун 5—6-шар кубометр вутă касса, нормăна 220 процент таран тултарса ĕçлерĕ. «Самолет» колхоз членĕсем Иван Степанов, 51 çулхи Николай Сейфин тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Егор Тарасов, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, нормăсене 150—180 процент тултарса пыраççĕ. «Труд» колхоз членĕсем Ладонинпа Бутков ялан 4-шар кубометр вутă хатĕрлеççĕ.

Юлашки вăхăтра уйрăм рабочисем кăна мар, бригадăсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. «Лесной Огонек» колхозран пынă Яков Кочетков бригади ăмăртăва хутшăннă хыççăн плана 120 процент, «Комбинат» колхоз членĕсен Захаровпа Лотря юлташсен бригадисем 130 процент тултараççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче хĕрарăмсем те пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ, вĕсем нихăш енчен те вăйпитти арçынсенчен юлмаççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕ Макарова юлташ ертсе пыракан бригада заданине 120 процент, Даниловăпа Губанова бригадисем — 140 процент тултараççĕ. Вăтамран илсен, вăл бригадăн членĕсем кашниех куллен 4-шар кубометр вутă касаççĕ.

Х. Лисин.

ХĔРЛĔ ÇАР БОЕЦĔСЕНЕ— УЯВ ПАРНИСЕМ

ЙĔПРЕÇ, февралĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Февралĕн 5-мĕшĕнче районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне ярса пама пухнă парнесен пĕр ушкăнне фронта ăсатрĕç. Вĕсен шутĕнче 33 килограмм çу, 90 килограмм пыл, 143 килограмм махорка, 525 çăмарта, 120 пăт тулă çăнăхĕ, 34 пăт ытла какай, тăварланă пахча-çимĕç 60 пăта яхăн, уйрăм посылкăсем 120.

Д. Михайлов.

* * *

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Çак кунсенче «Труженик» заводри пуçламĕш парторганизаци секретарĕн кабинетĕнчен халăх татăлмасть. Унта килхуçи хĕрарăмĕсемпе заводри рабочисем пĕрин хыççăн тепри кĕре-кĕре тухаççĕ.

Сĕтел çинче ещĕксем, илемлетсе çĕленĕ хутаçсем выртаççĕ. Вĕсем —заводри рабочисен Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне ямалли парнисем.

Секретарь кабинетне пĕр хĕрача васкавлăн пырса кĕчĕ.

— Федор Павăлч! Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене панă приказпа паллăшнă хыççăн, пирĕн цехри рабочисем малтан пухнă парнесемсĕр пуçне пармесем татах пухрĕç. Паян акă вĕсем 870 тенкĕ укçан хываççĕ,—тет хĕрача, сĕтел çине 870 тенкĕ укçа кăларса хурса. — Кусене эпĕ хам ятпа паратăп,—тет вăл пурçăнран çĕленĕ енчĕке тата чĕлĕм туртмалли хута кăтартса.

— Юрать, аван!—тет секретарь, парнесене илсе хурса.

Çамрăк хĕрача хăвăрттăн тухса каять.

Çакă вăл—заводри электромонтер, комсомолка Наталия Горячева. Вăл заводра пуринчен малтан Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне парне ярас ĕçе организациленĕ. Хастарлă хĕрача, активлă общественница.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа фронтовиксем патне кашни рабочипе работница мĕн те пулин яма тăрăшать. Пĕр-икĕ кун хушшинчех вĕсем темиçе килограмм табак, типĕтнĕ какай, печени, алшиш-носкисем пухрĕç. Çак хисеплĕ ĕçе заводри рабочисем кăна мар, вĕсен арăмĕсемпе тăванĕсем те активлăн хутшăнчĕç. Килхуçи арăмĕ Перасковья Щеглова (унăн упăшки фронтра) илемлетсе çĕленĕ енчĕк ăшне табак, спичка, çÿхе хут чиксе, пĕчĕк парне ярать. Парнепе пĕрлех вăл кĕске çыру çырать. «Хисеплĕ боец!—тесе çырать Щеглова юлташ хăйĕн çырăвĕнче.—Çак парнене эпĕ сана хаклă юлташ вырăнне хурса, чĕререн савса яратăп».

Çакăн пек çырусем кунта сахал мар. Чăнах, вĕсене кĕскен çеç çырнă, анчах вĕсем кашниех тылпа фронт хушшинче çирĕп çыхăну пуррине, пирĕн халăх хăйĕн воинĕсене чĕререн юратнине уççăнах кăтартса параççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк пулеметчик Николай Лукошкин (Вăрнар районĕнчи Уравăш ялĕнчен). Фронтра паттăррăн кĕрешнĕшĕн ăна Правительство наградине пама тăратнă.

Хулари парткабинет Хĕрлĕ Çар кунĕ умĕн

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уява хатĕрленнĕ май, ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ пропагандистсемпе агитаторсем валли лекцисемпе докладсем чылай ирттерчĕ. Ку ĕç план тăрăх пулса пырать.

Февралĕн 5-мĕшĕнче хулари агитаторсемпе пропагандистсем валли «Сталин — Хĕрлĕ Çарăн тата пĕтĕм халăхăн çулпуçĕ» темăпа лекци ирттернĕ. Çак темăпа табак фабрикинче, Облвоенкоматра, Чăвашсоюзра, госпитальсенче тата ытти предприятисемпе учреждениссенче те лекцисем иртнĕ.

Февралĕн 8-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинче парткабинетра, çавăн пекех хулари предприятисемпе учрежденисенче те, лекцисем нумай ирттерме палăртнă. Агитаторсемпе пропагандистсем валли лекцисем çакăн пек темăсемпе ирттереççĕ: «Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни», «Сталин—аслă полководец», «Хĕрлĕ Çар тата пирĕн халăх нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçăра». Çавăн пекех квалификациллĕ лекторсем радио тăрăх лекцисем вуласа параççĕ: февралĕн 15-мĕшĕнче «Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни» темăпа, февралĕн 19-мĕшĕнче — «Отечественнăй вăрçăн геройĕсем» темăпа, февралĕн 25-мĕшĕнче — «Большевиксен партийĕ — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿсен организаторĕ» темăпа тата февралĕн 23-мĕшĕнче — «Ленинпа Сталин — Хĕрлĕ Çарăн организаторĕсемпе çулпуçĕсем» темăпа.

Предприятисемпе учрежденисенче уяв доклачĕсем тума çар чаçĕсем 100 докладчик ытла уйăрса параççĕ. Кунсăр пуçне отечественнăй аслă вăрçăн участникĕсемпе тĕл пулмалли вечерсем организацилеме палăртнă.

Д. Ляшко.

Чăваш хресченĕ—патриот ВЯЗОВ

СĔНТĔР. Димитрий Петрович Вязов Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн пыл хурчĕсен утарĕнче 1937 çултанпа ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче вăл паха çитĕнÿсем турĕ. Колхозăн утарĕнче пыл хурчĕсен йышĕ çулран çул ÿссе пычĕ, утар колхоза пысăк тупăш паракан пулчĕ.

1940 çулта 12 çемьерен Вязов юлташ пурĕ 420 килограмм пыл пуçтарса илнĕ. Икĕ çул хушшинче утарта çĕнĕрен çичĕ çемье хутшăннă.

1942 çулта Вязов юлташ хăйĕн ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿ турĕ. Вăл вăтам шутпа кашни вĕллерен 44,8 килограмм пыл пухса илнĕ.

Стахановла ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх, Вязов юлташ кăçал нумай килограмм пыл тата укçа илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ĕçшĕн хушса панă тупăша вăл йăлтах Хĕрлĕ Çар фондне пачĕ. Димитрий Петрович танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума государство банкне 12 пин тенкĕ укça, Хĕрлĕ Çар фондне 19 пăт тырă хыврĕ.

М. Потапова.

Йĕпреç районĕнчи парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ

ЙĔПРЕÇ. Коммунистсен районри отчетпа суйлав пухăвĕ парторганизацин отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райком секретарĕн Ф. Артемьев юлташăн докладне итлесе сÿтсе-яврĕ.

Партиллĕ-политикăлла ĕçе тивĕçлипе туса пырса, районри большевиксем ĕççыннисене партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçлана çĕре начар мар мобилизацилесе пычĕç,—тет докладчик.—Мĕнпур ĕçе вăрçă интересĕсене пăхăнтарса, политикăлла ĕçсене хуçалăхри ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса туса пынă май, районри чылай колхозсем 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем мирлĕ вăхăтринчен темиçе хут лайăхрах, хастарлăрах, тухăçлăрах ĕçлерĕç. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче колхозлă ялăн патриотизмĕ ÿсрĕ. Районра социализмлă çĕрĕçĕн çĕршер стахановецĕсемпе ударникĕсем ÿссе çитĕнчĕç.

Пĕлтĕрхи ялхуçалăх ĕçĕсен ăнăçлăхне политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçсене лайăхрах туни татса пачĕ. 1941 çулта районри колхозсем çуртыррисене 25—30 кун хушшинче, çĕрулмине 40—45 кун хушшинче пухса кĕртнĕ пулсан, пĕлтĕр вара кĕрхи тырăсене 7—8 кун, çуртыррисене 10—12 кун, çĕрулмине 10—15 кун хушшинче пухса кĕртнĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсем тата партин хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене сÿрĕккĕн туса пычĕç. „Чувашия", „Красный водник" колхозсем, сăмахран, çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе кĕтсе илеймен пирки иртнĕ çуракинче начар пахалăхлă вăрлăх акса хăварнă. Çавăн пирки акнă лаптăкăн нумай пайне тепĕр хут акма лекнĕ. Вăл колхозсенче уборка ĕçĕсем вăраха тăсăлнă.

Пренире тухса калакансем хăшпĕр колхозсем кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшсене пĕтерменнине кăтартрĕç. 1943 çулхи вăйлă тырпулшăн район çителĕксĕр кĕрешет-ха.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттармалли уйăхлăхра район уя тислĕк кăлармалли плана 53 процент, торф кăлармалли плана 3 процент, кĕл пухмалли плана 38,2 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлес плана 29 процент çеç пурнăçланă. Минераллă удобренисене 22 процент чухлĕ çеç кÿрсе килнĕ.

Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Район пĕлтĕр выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 80,8 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 94,6 процент, сыснасем енĕпе 84,5 процент, сурăхсем енĕпе 97,6 процент çеç тултарнă.

1942 çулта крахмал, сĕт-çу завочĕсем, леспромхоз лайăхрах ĕçленĕ. Леспромхоз вăрман касса хатĕрлемелли 1942 çулхи плана 171 процент, турттарса кăлармалли плана 133 процент тултарнă. Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана икĕ уйăх малтан тултарнă.

Çав вăхăтрах „Спотара" вăрман завочĕ (директорĕ Тарасов), Буинскри вăрман завочĕ (директорĕ Сорокин), Буинскри сланец рудникĕ (управляющийĕ Юрьев), райлесзаг (директорĕ Алексеев) чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Çавна пула пĕлтĕр вырăнти промышленноçăн районри 4 предприятийĕ кăна çĕршыва 1.160 пин тенкĕлĕх продукци парса çитермен.

Вырăнти промышленность предприятийĕсем начар ĕçленĕ. „Социализм", „Красный строитель", „Кооплеспром" „Маяк" промартельсем 1942 çулхи плана 7 процентран пуçласа 27 процента çити çеç пурнăçланă.

ВКП(б) райкомĕ тата унăн отделĕсем коммунистсене вĕрентсе, воспитани парса пырас тĕлĕшпе туна ĕçе те çителĕклĕ теме çук. Хăшпĕр коммунистсем парти дисциплинине пăснă.

Отчетлă тапхăрта парти ретне пĕтĕмпе 178 çынна илнĕ, вăл шутра парти членĕн кандидачĕсем—100 çын. Райпарторганизаци колхозниксемпе трактористсем шутĕнчен сахал ÿснĕ. Партин „Красный металлист" колхозри, Эпеçри пуçламĕш организацийĕсем 1942 çулта парти ретне пĕр çынна та илмен.

ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕ тата райсовет исполкомĕ вырăнти ертсе пыракан кадрсене çирĕплетес, вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ „Коммунар", Калинин, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче çулталăк хушшинче 4—5-шер председатель улшăннă.

Пуху ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Пуху ВКП(б) райком пленумĕн составне, ревизи комиссине суйласа хăварчĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулма Ф. Артемьев, Г. Антонов тата Ф. Захаров юлташсене суйланă.

Д. Михайлов.

Ют çĕршывсенче

Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). „Дейли экспресс" хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ Хĕрлĕ Çарăн наступленилĕ ĕçĕсене пăхса тухса çакна палăртать: вырăс стратегийĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйĕн пысăк пахалăхĕсене кăтартрĕ. Сталинград патĕнче Германин 6-мĕш армине пĕтерсе тăкни Хĕрлĕ Çара çĕнĕ вăй пачĕ. Çав сотрудник тата çакна палăртать: Хĕрлĕ Çарăн малалла тапăнса пырас хастарлăхĕ кунсеренех ÿссе пырать, тет вăл.

„Рейнолдс" хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ Вернер хăйĕн „Гитлера пĕр минута та канма памалла мар" ятлă статьинче çапла çырать: Хĕрлĕ Çар тапăнса пынин вăйĕ тата анлăшĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче çĕнтерни Германи çарне нумай вăйсăрлатрĕ. Нимĕç войскисем Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçланăранпа тÿснĕ çухатусем Германи çарĕ 1918 çулхи çулла тÿснĕ çухатусенчен ытларах. Автор тата çакна палăртать: çак условисенче союзниксен кашни активлă операцийĕ Германие вăйлăрах пырса çапма тата унăн халăхĕн шухăш-кăмăлне начарлатма пулăшма пултарать. Нимĕçсем Африкăра татăклă поражени тÿсни Германин вăрçăри ятне тата çĕнĕрен варалана пулĕччĕ, унăн халăхне тата ытларах хăратса ÿкернĕ пулĕччĕ. Россия çĕнтерсе пынă пирки, Германин çар центрĕсене сывлăшран пырса тапăнни хальхи вăхăтра нимĕçсене ĕлĕкхинчен нумай ытларах пăшăрхантарать. Континентра наступлени тума Англипе Америкăшăн питех те лайăх майсем килсе тухаççĕ, тесе çырать Вернер. Гитлер хăйĕн войскисен пĕр пайне Хĕвеланăç Европăра тытса тăнă пирки вăл Совет Союзĕнчи фронта татасран чарса тăма пултарайман вăхăт çывăхарса килет. Кирек мĕн пулсан та Гитлера пĕр минута та канма памалла мар, тет Вернер.

Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар Курска илни çинчен мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаçатсем пурте Хĕрлĕ Çар Курск хулине илни çинчен пĕлтернине чи курăнмалла вырăнта пысăк саспаллисемпе пичетлесе кăларнă. Радиопа каласа ăнлантаракансем Хĕрлĕ Çарăн çав çĕнтерĕвĕсем çинчен ятарласа тухса каланă, вĕсем совет войскисем Германи çарне çĕнĕрен пырса çапни пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

„Нью-Йорк геральд трибюн" хаçат çапла çырать: Хĕрлĕ Çар Германин вăйлă тĕреклетнĕ базине аркатса тăкнă, çав база вăл пĕлтĕр хĕлĕпех нимĕç войскисен аллинче тăнă, тет. Хаçат çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар Курска илни нимĕç войскисем умне çĕнĕ пысăк хăрушлăх кăларса тăратать, стратеги тĕлĕшĕнчен унăн результачĕсем пысăк пулаççĕ.

Скрипс-Говард хаçачĕсен паллă обозревателĕ Клеппер радиопа çапла каланă: Хĕрлĕ Çар Курска илни Германин оборона линине çĕнĕрен татни пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ Германи войскисем умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратать, тенĕ. Ассошиэйтед пресс обозревателĕ Симпсон та çаплах каланă.

Центрта тухса тăракан хаçатсем совет войскисен Сталинград патĕнче тунă чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен мухтаса çырнисене халĕ те пичетлесе пыраççĕ.

ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕН СУТУ-ИЛУ ФЛОЧĔ ТУНĂ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй даннăйсем тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа 1943 çулхи январччен Германипе Италин суднисене пĕтĕмпе 7.480 пин тонна водоизмещени чухлĕ путарнă, тытса илнĕ тата сиенленĕ. Пĕр Вăтаçĕр тинĕсĕнче кăна подводнăй лодкăсем тĕнĕл держависен суднисене пĕр миллион тонна ытла водоизмещени чухлĕ путарнă. Çапла шутлаççĕ: Германипе Итали суту-илÿ флочĕн çухатăвĕсем Германипе Итали суту-илÿ флочĕн вăрçă пуçланас умĕн пулнă тоннажĕпе танлашать, теççĕ.

Англин информаци министерстви çапла шутлать: Германия Норвегирен, Голландирен, Францирен тата ытти çĕршывсенчен туртса илнĕ суднăсене шута илсен тата тĕнĕл держависен верфĕсенче тăвакан суднăсене шутласан, тĕнĕл держависен аллинче халь пĕр 4,5 миллион тонна чухлĕ водоизмещениллĕ суту-илÿ флочĕ пур.

МУССОЛИНИ 9 МИНИСТРА ĔÇРЕН КĂЛАРНĂ

ЖЕНЕВА, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Италин ютçĕршыв ĕçĕсен министрне Чианона отставкăна кăларни çинчен Римра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çавăн пекех юстици министрне Грандине, финанс министрне Таон ди Ревеле, çутĕç министрне Боттанине, çулйĕр министрне Ост Винтурине, корпораци министрне Ричине, пичетпе пропаганда министрне Паволинине, тулашри суту-илÿпе валюта министрне Риллардине, обществăллă ĕçсен министрне Горла ĕçрен кăларнă.

Çав министрсене пурне те урăх çынсемпе улăштарнă. Ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма Муссолини хăйне уйăрса лартнă.

ДАНИРЕ СУДНĂСЕМ ТĂВАКАН РАБОЧИСЕМ ЗАБАСТОВКА ТУНĂ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Скандинаври телеграф агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Ольборгри (Дания) суднăсем тăвакан верфьре февралĕн 4-мĕшĕнче пин рабочи забастовка тунă, ăна вĕсем нимĕçсем пĕр рабочие-сварщика вырăнтан кăларнине хирĕç протестлесе тунă.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Уэд-Кебир улăхĕнче пĕр паха высотана йышăнса илнĕ. Уссельтирен хĕвелтухăçнерехре союзниксен патрулĕсем активлăн кĕрешсе темиçе çынна тыткăна илнĕ. Çав районрах тăшманăн атакине сирсе янă.

Мароккоран радиопа пĕлтернĕ тăрăх, 8-мĕш армин малти отрячĕсем Триполитани чиккинчен Тунис территорине 50 километр шала кĕрсе кайнă ĕнтĕ.

Рейтер агентстви каланă тăрăх, Тунисра вăрçма тытăннăранпа февралĕн 5-мĕшĕччен Америка авиацийĕ Çурçĕр Африкăра тăшманăн 338 самолетне пĕтерсе тăкнă, 264 самолетне сиенленĕ.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРА ТЫТĂМ ЙĔРКИНЕ УЛĂШТАРНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радион пĕлтерĕвне пичетлет. Унта çапла каланă: февралĕн 2-мĕшĕнче Çурçĕр Африкăра чрезвычайнăй конференци пулса иртнĕ, ăна Жиро пухнă. Конференцире Алжирăн çĕнĕ генерал-губернаторĕ Пейрутон, Францин Çурçĕр Африкин губернаторĕ Буассон, Марокков хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Ногес генерал тата Çурçĕр Африкăри верховнăй комиссарăн заместителĕ Бержере генерал пулнă. Конференцире Çурçĕр Африкăра тытăм йĕркине улăштарасси çинчен сÿтсе-явнă. Жирона Çурçĕр Африкăн верховнăй çар тата граждан руководителĕ тесе ят панă, ăна „французсен интересĕсене сыхлама" хушнă. „Францин владенийĕсен советне", Дарлан тунăскере, хупнă. Çав совет вырăнне çар комитечĕ туса хунă, унта вырăнти губернаторсем тата Жиро генерал хăй уйăрса лартакан ытти çынсем кĕреççĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: февралĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла Англи бомбардировщикĕсем Абвильри чугунçул çинчи сооруженисене тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци Управленине халех çакăн пек ĕçсен мастерĕсем кирлĕ: киноопераци аппаратурине тÿрлетекенсем, радиоусилительнăй аппаратурăна тÿрлетекенсем, шалта çуннипе ĕçлекен двигательсене тÿрлетекенсем, электроток генераторĕсене тÿрлетекенсем, токарьсем, слесарьсем, вĕрентекенсем; склад заведующийĕ тата бухгалтерсем кирлĕ.

Ĕç укçине ĕçленĕ тăрăх тÿлеççĕ. Çак адреспа çырмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 21. ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци Управленийĕ.

Шоферсен курсне вĕренме февралĕн 15-мĕшĕччен илеççĕ. Курса 17 çула çитнĕ тата унтан иртнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене (çав шутра 1926-мĕш çулхи январьте, февральте, мартра тата апрельте çуралнисене те), тăвата класран кая мар вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вĕренекенсене стипенди параççĕ тата апат (ирхипе кăнтăрлахи апат) çитереççĕ.

Пур ыйтупа та çак адреспа пырса ыйтмалла: Шупашкар, Калинин ур., 51, Кадрсен отделĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен пырса ыйтма пулать.

2—1.

Ишлей районĕнчи Атăл-Ялти Молотов ячĕпе тăракан кустпром артелĕн çаврака пичетне, çухалнă пирки, законлă мар тесе шутламалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 631 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п.